ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

36 (4502) №, 2016, сентябрь (авăн), 15

1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă

Хакĕ ирĕклĕ

Индексĕ: 54802

ШКУЛА, АЧАСЕМ, ШКУЛА!

## Вика пирĕншĕн – ХĔВЕЛ!



Алексей Маков шкултан утса мар, чупсах таврăнчĕ. Ара, çулталăкран иртнĕ йăмăкĕшĕн, Викăшăн, çав тери тунсăхлать-çке вăл. Пўрт алăкне уçсанах пĕчĕкскер унăн ытамне чăмрĕ. Арçын ача вара ăна хăй çумне юратса çупăрларĕ.

– Пĕлтĕр тата пĕчĕкрех пулнăран пире çапла кĕтсе илейместĕнччĕ. Кăçал авă килте пирĕнсĕр тунсăхлатăн курăнать. Сумкăри тетрадьсемпе кĕнекесем те кăсăклантараççĕ сана. Акă хăв та ўссен пирĕн пекех шкула çўреме пуçлăн, аттепе аннене лайăх паллăсем илсе савăнтарăн, – тесе татах хăй çумне пăчăртарĕ.

Хавасла Вика пиччĕшне хыттăн ыталаса илчĕ, питĕнчен чуптурĕ. Çўçĕнчен ачашларĕ, вылянса сăмсине тĕккелерĕ.

Кĕçех Алеша сумкинчен печени кăларса Вика еннелле тăсрĕ. Пĕчĕкскер пушшех хавасланчĕ, ахăлтатса ала çупма тытăнчĕ.

Çук, çук, Алеша Викăна çеç мар, пурне те юратать. Ашшĕпе амăшне, Владимир Николаевичпа Юлия Васильевнăна, пĕртăванĕсене: Кольăна, Ксюшăна, Димăна, Сашăна, Настьăна, Викăна. Çапла, çиччĕн пĕртăван вĕсем. Пысăк та туслă çемье. Выльăх-чĕрлĕхĕ те йышлă. Ĕнисемпе пăрушĕсене, чăххи-чĕппине, сыснисене, йытă-типе кушакĕсене те хаваспах пăхаççĕ. Çулла ларса канма вăхăт çукрах вĕсен. Хĕл валли утă-улăм, кăшман чылай хатĕрлеççĕ. Тĕрлĕ салат янтăлама, варени-компот вĕретме ўркенмеççĕ. Ара, йышпа ĕç те кал-кал каять-çке!

– Пĕрремĕш класранпах хам укçа ĕçлесе илме тытăннă. Хăшĕ-пĕри касăва тухма ыйтать вĕт. Çавна пула алла самаях нухрат тытса куртăм çак çулсенче. Кăçал та пушă сĕтĕрсе уя пĕрре мар тухрăм. Килĕшет мана çут çанталăкра пулма, унăн хитрелĕхĕпе киленме, çав вăхăтрах çынсене те ырă тăватăп-çке! Аттепе аннен енчĕкне кăшт хулăмлататăп та. Çакăншăн хам та савăнатăп. Çемьене пулăшу-çке, – тет сăпайлăн Алексей. – Уйрăмах пĕчĕк Вика валли тутли илме тăрăшатăп. Тата ăна кĕленчене ăшă сĕт тултарса ĕçтерме юрататăп. Эх, мĕн тери хăпартланса ĕçет вăл техĕмлĕскере! Çапла тутлă ыйха та путать пĕчĕкскер. Çывăрнă чухне те тути йăл! кулать. Тĕлĕкре те пирĕнпе вылять ахăртнех... Пĕлетĕр-и, вăл пирĕн пукане. Пурте юрататпăр ăна. Килен-каян та ăна кăмăлласах чĕрçи çинче утьăкка сиктерет. Вика пирĕншĕн çап-çутă хĕвел. Вăл пурнăçа тата та хаваслăрах, савăнăçлăрах туса пырать.

*Элиза ВАЛАНС.*

Комсомольски районĕ,
Шурут.

ÇЫРĂНТАРУ – 2017

«ХЫПАРА» – КАШНИ ÇЕМЬЕНЕ

**Сентябрь уйăхĕн 1-мĕшĕнчен – 30% йўнĕрех**

2017 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн сентябрь *уйăхĕн 1-мĕшĕнчен* йўнĕ хакпа:
**«ХЫПАРА»** – 572,88 тенкĕпе, **«ХЫПАР-эрнекуна»** – 279,36 тенкĕпе,
**«ТАНТĂША»** – 226,08 тенкĕпе, **«САМАНТА»** – 171,84 тенкĕпе, **«ТЕТТЕНЕ»** 135,42 тенкĕпе
кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ

# «Янăш шкулĕн пуласлăхĕ пысăк»



**ПĔЛСЕ ТĂМА**

*Янăш шкулне çывăхри 16 ялтан 130 ача çӳрет, вĕсене икĕ автобус турттарать. Кунта хушма пĕлӳ парас тытăм лайăх аталаннă. Шупашкар районĕнчи Ача-пăча пултарулăх центрĕн педагогĕсем ачасемпе ятарлă уроксем ирттереççĕ. Шкултан вĕренсе тухакансенчен чылайăшĕ республикăри, çĕршыври аслă шкулсенче пĕлӳ илет. Конкурссенче, олимпиадăсенче палăрать.*

Авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче Чăваш Енре «Ял шкулĕн вĕрентекенĕ – Раççей векторĕнче» Пĕтĕм Раççейри ял вĕрентекенĕсен 3-мĕш сьезчĕ иртнĕ. Унăн ĕçне хутшăнма Раççей Федерацийĕн вĕренӳпе ăслăлăх министрĕ Ольга Васильева килнĕ. Сьезда Раççейĕн 62 регионĕнчен 505 педагог пуçтарăннă.

Ольга Васильева Чăваш Ен Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа пĕрле Шупашкар районĕнчи Янăш шкулне çитсе курнă. Алăк умĕнче чăвашла тумланнă ачасем кĕтсе илни уйрăмах кăмăллă пулнă. Хăнасем шкул çулне çитмен ачасен ушкăнĕпе тĕл пулнă, библиотекăпа информаци центрне, кабинетсемпе акт залне тата бассейнпа спорт залне пăхса тухнă. Спорта аталантарассипе уйрăмах вăйлă ĕçлеççĕ. Шкулта Wi-Fi вырăнĕ те пур, çакă та вĕренӳ ĕçне çăмăллатать.

Асăннă шкулта вĕрентӳ ĕçĕнче мĕнлерех меслетпе, вĕренӳ пособийĕпе усă курнипе те кăсăкланнă Ольга Васильева. Тĕрлĕрен профессие вăйă меслечĕпе вĕренекен ачасемпе сăмахлама та май тупнă. Космонавт пек тумланнă пуканене килĕштерни арçын ача, тĕслĕхрен, космонавт пулма ĕмĕтленет.

Ольга Васильева шкулти библиотекăпа информаци центрĕн ĕçне питĕ ырланă. Кунта хальхи техника ăслайĕсен комплексĕ пуян-çке: шкул ачисене кирлĕ кăларăмсем йăлтах пур. Вулама илнĕ кĕнекесен хушшинче «Мономах çĕлĕкне» те курсан РФ вĕренӳпе ăслăлăх министрĕ питĕ тĕлĕннĕ. «Çакăн чухлĕ кĕнекепе тата çавăн пек ачасемпе Янăш шкулĕ инçе кайĕ», – палăртнă вăл. Хăнасем пултарулăх студийĕсенче пулса ачасен алă ĕçĕсене те хакланă.

Педагогсем пĕрлехи вĕренӳ программипе ĕçлес кăмăл пуррине палăртнă. Кĕçĕн класс вĕрекенĕсенче ĕçе юратма хăнăхтаракан кĕнекесем ытларах кăларма, вунпĕрмĕш класран вĕренсе тухакансене вара литературăпа сăмах вĕççĕн экзамен тыттарассине çирĕплетме ыйтнă.

**Сăнӳкерчĕке cap.ru сайтран илнĕ.**

# Хӳтĕлевçĕ Алексей



Урамра çумăр лӳшкенине кантăкран сиччĕмĕш класс ачисем сӳрĕккĕн пăхса тăчĕç.

– Эх, паян сунчăк илме маннă. Киле кайнă чухне йĕпенетĕп ĕнтĕ, – сăмах хушрĕ Катя Андреева.

– Эккей, мĕн кулянмалли? Сахăр е тăвар мар, ирĕлмĕпĕр... Хам та çумăра пит килĕштерсех каймастăп, анчах шыва мĕн тери юрататăп. Çуллахи каникулта питĕ аван пулчĕ пĕвере чăмпăлтатма! – хавасланчĕ Алексей Александров.

– Алюш, эсĕ шыва юратнине эпир кăна мар, пĕтĕм ял пĕлет ĕнтĕ. Ара, çулла туту кăвакаричченех ишеттĕн. Чăнах, вăйлă ишевçĕ эсĕ. Санăн çăлавçă профессине çеç суйламалла, – калаçăва хутшăнчĕ Даниил Анисимов. – Эпĕ вара шывран хăратăп. Чун туртмасть.

Спорта юратакан Алексей Александрова класра пурте хисеплеççĕ, уйрăмах хĕрачасем.

– Вăл тунсăха путнă е пăшăрханакан çынна самантрах йывăр авăртан туртса кăларать. Кăмăла çĕклекен сăмахĕсене ăçтан тупса ĕлкĕрет-ши? Е тата пире кӳрентерме хăтланакана самантрах вырăна лартать. Пирĕн хӳтĕлевçĕ вăл. Унран Тăван çĕршыв ивăлĕ пуласса шанатпăр. Столовăйĕнче те унран тĕлĕнетпĕр. Пĕр апата та тиркемест, çăкăр татăкне те пăрахмасть. «Ăна поварсем пĕçернĕ, эсир иртĕхетĕр», – асăрхаттарать чашăк тĕпне апат хăваракана. Вырăнлă та пĕлсе калаçать. Унран вĕренмелли пирĕн питĕ нумай, – теççĕ вĕсем.

Хастар та йăрă арçын ача «Шăнкăрма» фольклор ушкăнне те хапăлласа çӳрет.

– Юрă-ташăсăр пурнăç çук. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче эпир республика ăмăртăвĕнче 1-мĕш вырăн тухни калама çук пысăк савăнăç кӳчĕ. Темиçе ушкăнтан эпир чи маттуррисем пултăмăр. Шкулпа район чысне ăнăçлă хӳтĕлерĕмĕр. Иккĕмĕш класра пĕлӳ илекен Таня йăмăкăм та хамашкалах. Юрă-ташă тĕнчине кĕрсе ӳкнĕ. Тепĕр чухне: «Пичче, хальлĕхе сана çитейместĕп. Анчах сăмах паратăп, эпĕ те хастаррисен йышне кĕрĕп, пултарулăхăмпа куракана тĕлĕнтерĕп», – тет яланах. Чăнах, юратнă йăмăкăм та сцена ăсти пуласса иккĕленместĕп, – хăпартланса пуплет Алексей.

Темпе те кăсăкланакан арçын ача юрăçă та мар, çăлавçă та мар – механик пуласшăн.

– Тĕнчере кирек хăш профессси те хăйне евĕр кăсăклă. Анчах кăмăла каяканнине суйлас килет. Çавăнпа та хам утас сукмак пĕр тумхахсăр пуласса шансах тăратăп, – çирĕплетет вăл.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*
Йĕпреç районĕ,
Кĕлĕмкасси.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 – (çур çула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 64-24-01

● ДИРЕКТОР – ТĔП РЕДАКТОР
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 28-83-70
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОРШĂН
Л.ВАСИЛЬЕВА

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1178 экз.

● ЗАКАЗ
№ 3288
Пичете авăн уйăхĕн 14-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Халăхсен туслăхĕ – ĕмĕре



Шупашкарти Андриян Николаев космонавт ячĕллĕ 10-мĕш шкул паянхи пурнăç ыйтнă пек ĕçлекен шкулсенчен пĕри. Унăн туслă йышне Светлана Кумалькова чылай çул ертсе пырать. «Пирĕн патра вĕренекен кашни халăх ачи хăйне тăван килĕнчи пек хăтлă туйтăр», – тет вăл.

Шкулта, чăн та, ăнланупа çураçулăх хуçаланать. Икĕ сменăпа вĕренеççĕ пулсан та тĕркĕшÿ çук. Чăваш чĕлхипе литератури тата тăван ен культури учителĕсем ачасене пĕлÿпе воспитани парас ĕçре тăван сăмаха, ырă йăла-йĕркене тĕпе хунинчен те килет-тĕр çакă.

Авăн уйăхĕн 10-мĕшĕнче Чăваш Енре пурăнакан халăхсен пĕрремĕш съезчĕ иртрĕ. Аслă пухăва халалласа 10-мĕш шкулти чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем «Халăхсен туслăхĕ – ĕмĕре» эрнелĕх йĕркелерĕç. Çакăн сăлтавĕ те пур: кунта 15-е яхăн тĕрлĕ халăх ачи ăс пухать. Классенче пĕр парта хушшинче чăвашпа вырăс, эрменпе узбек, украинпа таджик, тутарпа вьетнам ларать.

Вĕрентекенсем туслăх эрнинче ачасене чăваш халăх культурипе çывăхрах паллаштарас тĕллевпе ятарлă уроксем ирттерчĕç. Чăвашсен çи-пуçĕпе, апат-çимĕçĕпе, савăт-сапапа, кил-çуртри хатĕр-хĕтĕрпе паллаштарчĕç, хăш-пĕр сăмахсем урăх чĕлхепе мĕнлерех илтĕннине те танлаштарчĕç. Вĕренекенсем пĕр сăмахах тĕрлĕ чĕлхепе пĕр евĕрлĕ пулнине асăрхарĕç те тĕлĕнчĕç.

Чăваш чĕлхи вĕрентекен Юлия тата Лариса Анисимовăсемсĕр пуçне калаçăва ЧР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ Геронтий Никифоров хутшăнчĕ. Вăл шкулăн 301-мĕш пÿлĕмĕнче йĕркеленĕ этнографи кĕтесĕнчи экспонатсемпе тĕплĕн паллаштарчĕ. Вĕсене мĕнрен, мĕнле майпа ăсталанине, ăçта усă курнине пĕлме ачасемшĕн уйрăмах кăсăклă пулчĕ.

Тĕлпулура тĕрлĕ халăх туслăхĕпе пĕрлĕхĕ, Тăван çĕршыва юратмалли тата хисеплемелли пирки те иртрĕ калаçу. Ыйтукурав саманчĕнче ачасем хастар пулчĕç.

Çакнашкал ырă пуçарупа шкулти тĕрлĕ халăх ачисене ăс-хакăла пуянлатма, тавракурăма анлăлатма пулăшаççĕ чăваш чĕлхи учителĕсем. Туслăха çирĕплетесси тата чăвашлăха аталантарасси – тĕп тĕллев вĕсен.

***Геронтий НИКИФОРОВ,***
***ЧР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ,***
***ЧНК президиумĕн пайташĕ.***

## ПĔЛТЕРÿ

Патшалăх чĕлхисене аталантарас тата халăхсен хушшинчи туслăха çирĕплетес тĕллевпе **Раççей Федерацийĕн вĕренÿпе ăслăлăх министерстви тата Хусан (Атăлçи) федераци университечĕ Раççей республикисен патшалăх чĕлхисемпе (çав шутрах чăваш чĕлхипе те) олимпиада** ирттерет. Унта 10-11 классенче вĕренекенсем тата студентсем хутшăнма пултараççĕ.

Олимпиада регион тата пĕтĕмлетÿ тапхăрĕсенчен тăрать. Регион тапхăрне Чăваш Республикин вĕренÿпе çамрăксен политикин министерстви тата «Эткер» центр ирттереççĕ, вăл юпа уйăхĕн 1-15-мĕш кунĕсенче иртĕ. Пĕтĕмлетÿ тапхăрĕ чÿк уйăхĕн 2-4-мĕш кунĕсенче Мускавра пулать.

Олимпиадăна хутшăнма кăмăл тăвакансен **http://kpfu.ru/vserossijskaya-olimpiada.html** сайтра авăн уйăхĕн 25-мĕшĕччен регистрациленмелле, тулли информацие те çак адреспах вырнаçтарнă.

Ыйтса пĕлмелли телефон: **(8352)585628 («Эткер» центр, etker13@yandex.ru).**

# «Çамрăк вулакансен слечĕ» чĕнет!

**Авăн уйăхĕн 27-28-мĕшĕсенче ЧР ачасемпе çамрăксен библиотекинче интереслĕ ĕç-пуç пулса иртет: çамрăк библиотекарьсемпе вулакансен Пĕтĕм Раççейри «Халех – вулама!» слечĕ.** Кăсăклă пулăмсенчен пуян кунсем ачасемпе ашшĕ-амăшне нумай пĕлÿ тата хăнăху парĕç. Паллă çыравçăсем тĕлпулăва хутшăнса ăсталăха вĕренме, литература тĕнчин çĕнĕлĕхĕсемпе, библиотека программисен ярмăрккипе паллашма тата КВНра выляма тÿр килĕ!

Авăн уйăхĕн 27-мĕшĕнче 11 сехетре «Çамрăк вулакансен слечĕ» савăнăçлă лару-тăрура пуçланĕ. Ун хыççăн вулакансемпе çамрăк библиотекарьсен «Çынна кĕнеке мĕншĕн кирлĕ?» форумне театрласа уçĕç. Форумра ача-пăча литературинчи паллă авторсемпе – Юрий Кузнецовпа, Настя Строкинăпа, Евгений Рудашевскипе, Евгений Басовпа, Светлана Гордеевăпа, Наталья Васильевăпа – паллашма пулĕ. Чулхула, Белгород, Псков, Брянск, Орел облаçĕсенчи, Мари Эл Республикинчи тата Чăваш Енĕн районĕсенчи çамрăк библиотекарьсемпе вулавçăсен ĕçĕсенчи интереслĕ ăслăлăх пĕтĕмлетĕвĕсене те пĕлме тÿр килĕ. Çамрăк куракансем валли çак кун усăллă маçтăр-классем /«Кĕнеке хавхалантарчĕ» тата «Кĕнекепе кино»/, çавăн пекех пултарулăх лаççисем /«Электрон форматлă библиотека» тата «Литература разведки»/ иртĕç.

Авăн уйăхĕн 28-мĕшĕнче актуаллă литературăн «Вулани – усăллă! Вулани – кăсăклă! Вулани – хальхилле! Халех – вулама!» курав презентацийĕ слета малалла тăсĕ. Унта чи çĕнĕ, чи курăмлă кăларăмсем пулĕç. Ача-пăча арт-паблиситийĕнче вара викторинăсемпе конкурссем иртĕç. Вулассине ÿстерес енĕпе библиотека программисен ярмăрки пулĕ, çитĕнекен ăрăва пĕлÿ парас ыйтусене хуравлĕ вăл. Пĕчĕк вулакансемпе çамрăк библиотекарьсем валли «Кĕнеке+Кино» КВН иртĕ, вăл чи пысăк пĕлÿллĕ вулакансемпе специалистсене тупса палăртĕ.

«Çамрăк вулакансен слетне» вĕçлекен чыслав самантĕнче «Чи вулакан çемье» республика конкурсĕн çĕнтерÿçисене саламлĕç.

Пултаруллă музыкантсем, ташă коллективĕсем, литература çĕнĕлĕхĕсем, дипломсемпе Тав хучĕсем – çакă йăлтах сире авăнăн 27-28-мĕшĕсенче ЧР ачасемпе çамрăксен библиотекинче иртекен «Çамрăк вулакансен слетĕнче» кĕтет!

# «Чăваш кĕнеки. Пултаруллă çамрăксем»

## регионсен хушшинчи конкурса хутшăнмасăр ан юлăр!

Сисĕнмесĕрех çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ. Вăйхал пухнă ачасене тăван шкул кĕтсе илчĕ. Çак уявпа саламлать сире Чăваш кĕнеке издательстви, унпа пĕрлех регионсен хушшинче иртекен «Чăваш кĕнеки. Пултаруллă çамрăксем» конкурса хутшăнма йыхравлать. Аса илтеретпĕр: вăл кăçалхи **пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче пуçланнă, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕччен** пырĕ.

Конкурса Чăваш кĕнеке издательствинче пичетленекен кĕнекесемпе тăтăшах интересленекен, вĕсене юратса вулакан ачасемпе вун çичĕ çула çитнĕ яшкĕрĕм хутшăнма пултарать.

Кăçал конкурс виçĕ номинаципе иртет:

**«Юратнă кĕнеке пирки çырнă чи лайăх хайлав»**. Ку номинацие хутшăнакансен Чăваш кĕнеке издательствинче тухнă кĕнекене вуланă хыççăн çуралнă шухăш-кăмăла тĕпе хурса хайлав хатĕрлемелле, ятне памалла. Вăл е ку кĕнеке сире мĕнпе тыткăнларĕ, мĕншĕн шăпах çак хайлава суйласа илтĕр т.ыт.те. Ĕç калăпăшĕ - 1-5 стр. Ĕçсене чăвашла та, вырăсла та хатĕрлеме пултаратăр.

**«Кĕнекери чи интереслĕ самант» темăпа хатĕрленĕ ÿкерчĕк».** Кĕнекери чи кăмăла кайнă сыпăка ÿкерчĕкре кăтартмалла. Пĕр-пĕр сăнарăн сăнÿкерчĕкне çеç калăпланă тата кĕнекесенчен ÿкерсе илнĕ ĕçсене жюри членĕсем пăхса тухмаççĕ.

**«Ача хатĕрленĕ чи лайăх кĕнеке»** номинаци. Ку номинацире ачан хăй шухăшласа кăларнă хайлава кĕнеке евĕр хатĕрлемелле. Çак ĕçре ачасем тĕрлĕ тĕслĕ кăранташсемпе, фломастерсемпе, илемлĕ хутсемпе усă курма пултараççĕ. Текста алăпа çырмалла, Интернетран тупса çыпăçтарнă ÿкерчĕксем пулмалла мар. Ку номинацире ача аллин ĕçĕ тĕпре.

Кирек хăш номинацие хутшăнакан ĕçе те ачан хăйĕн пурнăçламалла, аслисем хатĕрлесе панине жюри членĕсем шута илмеççĕ.

Кашни ĕç çумне уйрăм хут çине конкурса хутшăнаканăн:

- номинаци ятне,
- ячĕпе хушаматне,
- миçе çултине,
- хăш шкулта вĕреннине /чăвашла та, вырăсла та, тулли те тĕрĕс/,
- килти адресне,
- конкурса хутшăнма хавхалантараканăн /ертÿçĕн/ хушаматне, ятне, ашшĕ ятне туллин, телефон номерне,
- суйласа илнĕ кĕнекен ятне, авторне, миçемĕш çулта тухнине çырса палăртмалла.



Ĕçсене çак адреспа йышăнаççĕ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13 çурт, Чăваш кĕнеке издательстви, 820 пÿлĕм, «Чăваш кĕнеки. Пултаруллă çамрăксем» конкурс. «Юратнă кĕнеке пирки çырнă чи лайăх хайлав» номинацие тăратнă ĕçсене **fed_ol@mail.ru** электрон адреспа яма юрать.

Конкурсăн тулли йĕркипе /Положенийĕпе/ тата конкурса хутшăнакансен спискĕпе Чăваш кĕнеке издательствин сайтĕнче **www.chuvbook.ru** адреспа «Конкурссем, акцисем» пайра паллашма пулать.

Ăнăçу сунатпăр!

***Ольга ФЕДОРОВА редактор.***

# Астăвăма лайăхлатма

1. **Тимлĕ пулăр.** Пирĕнтен чылайăшĕ кирлĕ пек туйăнакан информацие çеç ăса хывать, ыттине вара хăлхана чикмест. Пуç мимине аталантарас тесен питĕ нумай пĕлмелле. <u>Ансат хăнăхтару.</u> Сĕтел çине 10 тĕрлĕ япала хурăр. 10 таран шутланă май кашнине тимлĕн сăнама тăрăшăр. Унтан çурăмпа çаврăнăр та çав япаласене сăнласа парăр.

2. **Вулăр.** Телевизор пăхнă чухне пуç ĕçлемест. Вуланă вăхăтра вара моторлă тата курăмлă астăвăм, пуç мимин ятарлă пайĕсем ĕçлесе каяççĕ.

3. **Çывăрса тăранăр.** Ыйхă вăхăтĕнче пуç мими кун каçа мĕн пулса иртнине тишкерет, хăшне асра хăвармаллине татса парать. Анчах асра тытăр: çывăрма пулăшакан ятарлă эмел е антидепрессант ĕçни йĕркеллĕ ыйхă кӳмест.

4. **Пуça кантарăр.** Манăçтарасси – пирĕн пуç мимин усăллă енĕ теме пулать. Вăл пире ытлашши информаципе туласран çăлать. Çавăнпа мĕн пĕлнине пĕтĕмпех пуçра тытаймасан ятарлă тетрадь пуçласа унта çырса пыма юрать.

5. **Юрлăр.** Хорпа юрлани савăнăçпа киленӳ кăна кӳмест, вăл тата астăвăма аталантарса çирĕплетет.

6. **Куç хупса çӳрĕр.** Хăвăрăн яланхи ĕçсене /тумланасси, чечек шăварасси, вĕренӳ сĕтелне пуçтарасси/ куç хупса пурнăçлăр. Лоуренс Катц çак хăнăхтарусене нейробика е пуç мимин фитнесĕ тет. Пуç мимин клеткисем мĕн чухлĕ хастартарах, вăл çавăн чухлĕ ытларах нейтрофин кăларать, ку вара мимешĕн усăллă.

7. **Физкультурăпа туслă пулăр.** Тĕрлĕрен хускану тăвакан, спортпа туслă ачан пуç мими лайăххах ĕçлет.




# Хăватлă математика



1. Акăлчан математикĕ Абрахам де Муавр ватлăхри кунĕсенчен пĕринче хăйĕн ыйхи кашни кун вун пилĕк минут чухлĕ нумайланса пынине асăрханă. Арифметика прогрессине тунă хыççăн вăл ыйхи 24 сехетпе танлашас куна шутласа кăларнă – 1754 çулхи чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕ. Шăпах çав кун вилсе кайнă вăл.

2. Тĕне ĕненекен еврейсем христиан паллинчен тата хĕресе аса илтерекен пур япаларан та асăрханаççĕ. Тĕслĕхрен, Израильти хăш-пĕр шкулта вĕрене-кенсем «хушас» паллă вырăнне «т» саспаллине кутăн çавăрса çыраççĕ.

3. Америка математикĕ Джордж Данциг, университет аспиранчĕ чухне, пĕррехинче урока кая юлса çитнĕ. Доска çине çырнă уравненисене вăл киле ĕç вырăнне йышăннă. Уравненисем ăна ытти чухнехинчен чылай йывăртарах пек туйăннă. Анчах темиçе кунтан вăл пурпĕрех вĕсене шутласа кăларнă. Чи кăсăкли, çав уравненисем «шутланманнисен» йышне кĕнĕ иккен, вĕсем пирки чылай ăсчах пуç ватнă.

4. Софья Ковалевская пĕчĕк чухнех математикăпа паллашнă. Унăн пӳлĕмне валли обой çитмен, çавăнпа та стенисене Остроградскийĕн дифференциаллă тата интеграллă шутлавĕ çинчен калакан лекци хучĕсене çыпăçтарнă.

**● КУЛСА ИЛЕР-ХА**

Ашшĕпе пилĕк çулти ывăлĕ утса пыраççĕ. Арçын ача панулми çиет.

– Атте, панулми мĕншĕн тĕттĕмленет?

– Ăнланатăн-и, ывăлăм, пирĕн атмосферăра ирĕклĕ кислород çӳрет. Панулмие вара кальци, магни тата чи кирли – тимĕр – пур. Тимĕр ирĕклĕ кислородпа реакцие кĕрет. Çапла вара виçĕ валентлă тимĕрĕн оксичĕ пулать, вăл хăмăр тĕслĕ.

Шăплăх. Пĕри те сăмах чĕнмест.

– Атте, эсĕ халь кампа калаçрăн? – тет ывăлĕ кăшт тăхтасан.

☺ ☺ ☺

Тĕлĕкре Менделеев таблицине курсан тӳрех ан вăранăр. Тен, вĕренсе çитме те пулĕ…

☺ ☺ ☺

– Эпир халĕ ăçта?

– Нейтраллă шыв çине иксе тухрăмăр.

– Мĕншĕн апла шухăшлатăн?

– Лакмус тĕсĕ улшăнмасть!

# Хăрушă Барсакельмес

**Барсакельмес утравĕнче урăхла чĕрчунсене, çутă юписене, тата паллă мар вĕçекен обьектсене час-часах курма пулать. Кунта çынсем те çухалаççĕ. Çак вырăнта иртнерĕ пĕр сехет вара уйăха е çулталăка тăсăлнăн туйăнать.**

**Ку утрава 1848 çулта Алексей Бутаков гидрограф ертсе пыракан ăслăлăх экспедицийĕ уçнă. Барсакельмесра çынсем иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче пурăнма пуçланă, ун чухне кунта сунар хуçалăхĕ йĕркеленнĕ. 30-мĕш çулсенче çак вырăнта пысăк наци заповеднике туса хунă, унта пурне те кĕртмен.**

**Барсакельмесран темиçе çухрăмра Çĕнелӳ утравĕ вырнаçнă. Михаил Антонов тĕпчевçĕ шухăшĕпе кунта биологи хĕç-пăшалĕ тăвас ĕçсем иртнерĕ.**



### Кайсан — килейместĕн!

Казахстанри Арал районĕнче вырнаçнă тĕлĕнтермĕш утрав, Барсакельмес, чăвашла куçарсан «кайсан – килейместĕн» тенине пĕлтерет. Ĕлĕк-авал кунта питĕ нумай хурткăпшанкă тата наркăмăшлă çĕлен пурăннă. Çакăнта канма чарăннă пулăçсем вара килне тек таврăнайман.

### Тĕпсĕр тинĕс çăтнă

Барсакельмеса пулла çӳрекенсем тинĕс тăвăлне лекме те пултарнă. Уфологсем çак утрав питĕ вăйлă геоактивлă зонăра вырнаçнине палăртаççĕ. Аномалиллĕ пулăмсене /паллă мар вĕçекен обьектсем, вăхăт «сикни», çынсем çухални/ çакăнпах çыхăнтармалла.

### Вĕсем яланлăхах çухалнă

Барсакельмес çинчен асăнни Н.Рерихăн «Ази чĕри» хайлавĕнче тĕл пулать. 19-мĕш ĕмĕрĕн юлашки çулĕсенче çак вырăнта пĕр вăхăтрах темиçе çемье çухални çинчен каланă унта.

20-мĕш ĕмĕрте те çухалакансем пулнă-ха. 1949 çулхи кĕркунне пулăçсен шхуни утрав патне чарăннă. Пулăçсем канма тесе çырана тухнă. Унта вĕсем çĕр çумне çыпăçтарнăн курăнакан пĕлĕте асăрханă. Пулăçсем ун патнелле çывхарнă, чи харсăррисем тĕтре ăшнех кĕрсе кайнă. 20 минута яхăн вăхăт иртнĕ, анчах çав хăюллăскерсенчен пĕри те таврăнман, сасă паракан та пулман.

Пĕр сехет кĕтнĕ. Тĕлĕнтермĕш пĕлĕт ăшне кĕме кăмăл тăвакан урăх пулман. Икĕ çын çухалнине пĕлтерсе шхунăран радиограмма янă. Сасартăк пĕлĕт хăй те куçран çĕтнĕ. Пулăçсене çаплах никам та шыраса тупайман.

### Талăк мар иккен, çулталăк

Çак утрав çинче вăхăт аномалийĕсем анлă сарăлнă. Пĕр халапа ĕненес пулсан, кунта тахçан Хиваран тарнă тарçăсем пытанса пурăннă. Тăван енне таврăнсан вĕсем çул çинче темиçе уйăх кăна мар, çулталăксем иртнине ăнланнă. Ватăлнă тăванĕсемпе çывăх çыннисене аран-аран палласа илнĕ. Çак «шӳтшĕн» вара кашнинчех утрав çинчи усал вăйсене айăпланă.

1993 çулта çынсен пĕр ушкăнĕ çыран хĕррипе уçăлса çӳренĕ. Кĕтмен çĕртен туристсене шурă пĕлĕт хупăрласа илнĕ. Хăйсем çирĕплетнĕ тăрăх вĕсем унта çирĕм минут кăна пулнă. Анчах каялла таврăнсан вĕсене тĕлĕнмелле хыпар кĕтнĕ: туристсем çухалнăранпа талăк та иртнĕ иккен, çăлавçăсем тахçанах шырава пуçăннă.

*Материалсене пухма Юлия ВАСИЛЬЕВА*
*Патăрьел районĕ, Çĕньял/ пулăшнă.*

● МОДА

# Мĕн-ха вăл слипон?

Юратнă «Чиперук страници!» Нумай пулмасть слипон туянтăм. Ăна мĕнле тумтирпе килĕштерсе тăхăнсан лайăхрах-ши?

*Яна НИКОЛАЕВА.*

Канаш районĕ.

Чи малтан çак пушмакпа кăштах паллаштарар.

Слипон е слип – хулăн резина тĕплĕ, шнурсăр çăмăл кеда. Акăлчан чĕлхинчен «slip on» – «тăхăнма» тенине пĕлтерет. Меллĕ, тăхăнма та хăвăрт пулнипе çапла ят панă ăна.

Слипона 1977 çулта Паул Ван Дорен шухăшласа кăларнă. Чи малтанах вăл серферсен /серфингпа кăсăкланакансен/ ура тăхăнмаллийĕ шутланнă. 80-мĕш çулсенче пĕр паллă кинофильмри тĕп сăнар пур çĕрте те слипонпа çӳренине кăтартсан халăхра та палăрма пуçланă.

Раççейре ку пушмак «эмо» субкультурăпа кăсăкланакансене пула палăрнă.

Паянхи кун слипон – чăн-чăн мода тренчĕ. Тĕрлĕ ӳкерчĕкпе илемлетни, уйрăмах пĕр тĕсли, çĕлен тирĕ евĕрли, чечекли, йăрăм-йăрăмли… Хăвăра килĕшекеннине суйлăр çеç. Асăннă пушмака нускисĕр тăхăнмалла. Тумтир те ун пекех меллĕ, çăмăл, ирĕклĕ пултăр.

Апла-тăк çак атă-пушмака кăмăла кайнă кирек мĕнле тумтирпе те пĕрлештерме юрать.



*Слипон комбинезонпа та илемлĕ курăнать. Сăранран, джинсран çĕлетни тата çурма классикăлли /хура е шурă тĕсли/ уйрăмах аван.*



*Чи ансат та анлă сарăлнă вариантсенчен пĕри – слипона кĕскерех ирĕк пĕçĕллĕ е скинни джинспа, классикăлла мар шăлаварпа пĕрлештересси. Юлашки хура кăвак, шурă тата хура тĕслĕ пулсан аван. Шăлавар пĕççисене таварма та юрать.*



*Слипон кĕпепе те килĕшӳллĕ курăннинчен тĕлĕнмелле-ши? Çапла, эсĕ ăна çак тумтирпе те тăхăнма пултаратăн. Чи кирли – кĕпен çӳлти пайĕ арçын кĕпине аса илтертĕр. Кĕске аркăлли е вăрăмми, ирĕкли е пилĕк тĕлне палăртаканни – пĕтĕмпех вырăнлă.*



*Шăлаварпа çеç мар, тĕрлĕ юбкăпа та килĕшсе тăрать ку пушмак. Вăл кĕске, чĕркуççирен аялarah, «кăранташ» фасонлă пулма пултарать. Çавăн пекех шортă евĕр юбка килĕшӳллĕ курăнĕ.*

● ХАМĂР ХУШĂРА

# Савăнма пĕлетĕн-и?

## Тест

Кулленхи йывăрлăхсем çинчен манса чун каниччен кулма, савăнма пултаратăн-и? Тĕрĕслер-ха.

**1. Пĕр-пĕринчен кулнине, йĕкĕлтенине мĕнле йышăнатăн?**
А. Хамран кулмасан – йĕркеллех – 2 балл.
Ă. Шӳтлеме те юрататăп, хамран кулнине те ăнланатăп – 3 балл.
Б. Ача-пăча вăййи – 1 балл.

**2. Хăвна ăçта лайăхрах туятăн?**
А. Юлташсемпе, пысăк та шавлă ушкăнра – 3 балл.
Ă. Юлташсемпе, пĕчĕк ушкăнра – 2 балл.
Б. Пĕччен – 1 балл.

**3. Палламан çын йăл кулса пăхсан…**
А. Хирĕç йăл кулатăн – 3 балл.
Ă. Курмăш пулатăн – 2 балл.
Б. «Манпа пĕтĕмпех йĕркеллех-ши?» – тесе шухăшлатăн – 1 балл.

**4. Хăш каларăш ытларах килĕшет?**
А. Кампа савăннине манма пулать, кампа хуйхăрнине вара – нихăçан та – 1 балл.
Ă. Ырă – ырăпах, усал усалпах таврăнать – 2 балл.
Б. Кулă çынсене çывăхлатать – 3 балл.

**5. Сана уяв каçне чĕнчĕç. Карнавал тумĕпе пымалла. Эсĕ…**
А. Тӳрех килĕшетĕн – 3 балл.
Ă. Малтан лайăх шухăшлатăн – 2 балл.
Б. Килĕшетĕн – 1 балл.

**6. Тăтăш кулатăн-и?**
А. Çапла – 3 балл.
Ă. Сайра – 2 балл.
Б. Пачах кулманни те пулать – 1 балл.

**Пĕтĕмлетӳ**

*6-9 балл.* Е вĕренӳри лару-тăру тивĕçтермест, е кăмăлу япăх. Йывăрлăха çĕнтерес тетĕн-и? Унран кулса ил те çăмăлрах пулĕ. Япăх кăмăл та ĕмĕрлĕх мар. Ыранах чунра шăпчăксем юрлама пуçлĕç.

*10-14 балл.* Эсĕ шӳтлеме юратакан, кулăша ăнланакан çын. Çавах пысăк ушкăнсене кăмăлламастăн, йĕпленине, сăмахпа тĕртсе илнине юратмастăн. Çынсен умĕнче кулăшла курăнасран хăратăн. Кăшт хăюллăрах пул!

*15-18 балл.* Вăхăта усăллă та савăнăçлă ирттерме юрататăн, пĕлетĕн. Ыттисене те йăл кулă, хаваслăх парнелеме пултаратăн. Кирек хăш уявра та чи кĕтнĕ хăна эсĕ.



● ХĔЛЕ ХАТĔРЛЕНЕТПĔР

## Сливăран — повидло

**Повидло валли 2-3 килограмм слива, 2 килограмм çурă сахăр, 1 чей кашăкĕ лимон йӳçекĕ кирлĕ.**

Лайăх çунă сливăна хуппинчен тата вăрринчен уйăрмалла. Пысăк кастрюлте блендерпа вĕтетмелле те сахăрпа пăтратмалла. Пĕчĕк çулăм çинче 25-30 минут пĕçермелле, вĕреме кĕнĕ хыççăн çиелти кăпăкне пуçтарса илмелле. Лимон йӳçекĕ хушса тата 2-3 минут вĕретмелле. Хатĕр çимĕçе таса кĕленчене тултармалла та хупламалла. Ăшă япалапа чĕркесе пĕр талăка хăвармалла.

## Маринадланă пылак пăрăç

**Çимĕçе хатĕрлеме 8 пысăк пылак пăрăç, 1 пуç сухан, 8 ыхра шăлĕ, 4 кашăк ӳсентăран çăвĕ, 2 стакан çурă шыв, çавăн чухлех 9 процентлă уксус, 1 стакан та 250 грамм сахăр, тата 2 чей кашăкĕ тăвар.**

Çуса вăрринчен тасатнă пăрăça çавракан касса кĕленчене тултарăр. Вĕтетнĕ сухан, ыхрапа çу хушăр.

Пысăк кастрюльте уксус, сахăр, тăвар хушнă шыв вĕретĕр. Кĕленчене ярса стерилизациленĕ хупкăчпа хуплăр.

## Груша компочĕ

**3 литрлă кĕленче валли 1 килограмм та 300 грамм груша, 110 грамм сахăр, 3 литр шыв, кăштах лимон йӳçекĕ кирлĕ.**

Çуса тасатнă грушăна кастрюле тултарăр та шыв ярăр. Пысăках мар çулăм çинче вĕреме кĕнĕ хыççăн 15 минут пĕçерĕр. Улма-çырлана стерилизациленĕ кĕленчене куçарăр. Юлнă шĕвеке сахăрпа лимон йӳçекĕ хушса пăтратăр. Вĕреме кĕртĕр те кĕленчене ярăр. Савăта хуплăр, кутăн çаварса лартăр.




ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Вăрттăнлăхсен управçи тата шăпăрлансен тусĕ

**Ĕлĕкех те мар, хальтерех те мар кукамай кĕнчелеççи тытатчĕ те çăм арлама ларатчĕ. Шăллăмпа иксĕмĕр, чарусăрскерсем, лара-тăра пĕлменскерсем, самантрах шăпланаттăмăр, ун çумнерех йăпшăнаттăмăр. Сÿтĕлетчĕ вара сăмах çăмхи...**




Хаклă та юратнă çыннăмăр пире, мăнукĕсене, тĕрлĕ юмах-халап, чăн пулнă историсем каласа паратчĕ. Çавăн пекех питĕ нумай тупмалли юмах астăватчĕ кукамай. Епле хăпартланса та ăмăртса шыраттăмăр-ха вĕсен тупсăмĕсене шăллăмпа. Никамăн та айванрах пулас килместчĕ. Ара, тĕрĕс хурава тавçăраймасан кукамай пире пĕр-пĕр çынна сутса яратăп тесе шÿтлесе хăрататчĕ. Çакăнпа çыхăннă та ĕнтĕ тупмалли юмаха сутмалли тесе шахвăртни.

Çулсем иртеççĕ, самани улшăнать... Чылай йăла-йĕрке е пăрахăça тухать, е теприне ылмашăнать. Апла пулин те тупмалли юмахсем XXI ĕмĕрте те хăйсен пĕлтерĕшне çухатман-ха. Ăс-хакăла пуянлатас, тавçăрулăха ÿстерес, тавракурăма аталантарас тĕлĕшпе паянхи вăйăсенчен пĕртте кая мар вĕсем. Ачашăн тупмалли юмах яланах кăсăклă: вăл вăрттăнлăхпа çыхăннă. Вăрттăнлăх вара хăватлă та илĕртÿллĕ.

Çакна асра тытса Чăваш кĕнеке издательстви чи пĕчĕк вулакансем валли чăннипех асамлă кĕнеке хатĕрлерĕ. 1000 экземплярлă тиражпа тухнăскер «Загадки. Тупмалли юмахсем» ятлă. Унăн авторĕ – Алимпиада Кручинина, редакторĕ – Ольга Иванова. Ку кăларăмра интереслĕ те янăравлă тупмалли юмахсем çеç пуçтарăннă. Маттур, хастар арçын ачасемпе хĕр пĕрчисем вĕсене вырăсла та, чăвашла та вулаяççĕ, мĕншĕн тесен кĕнеке икĕ чĕлхепе пичетленнĕ. Алимпиада Петровнăн сăвăлла тупмалли юмахĕсене чăвашла куçараканĕ – Юрий Сементер Чăваш халăх поэчĕ.

Куçару чĕлхин çыпăçулăхĕпе килĕшÿлĕхне хăвăр та хак пама пултаратăр. Кашни çаврара – сăнарлăх, тарăн шухăшлăх, илем. Авторпа куçаруçă вулакансене йывăçкурăкпа чĕрчунсен тĕнчине, çут çанталăк пулăмĕсене сăнама хистеççĕ. Улшăнусене асăрхаса палăртма кăна мар, чунлăрах та ырă кăмăллăрах пулма вĕрентеççĕ.

Рос здесь дуб большой, огромный!
С массой желтых желудей.
Под его красивой кроной
Прятались мы в знойный день.
Кто-то вырубку задумал,
Без разбора дзень! да дзень!
Плакала пила-зануда,
Рос здесь дуб – остался ...

Улăп пек юман ларатчĕ,
Юлташсемĕр, çакăнта!
Çулсерен йĕкел сапатчĕ
Сар тÿшеклĕ вăрманта.
Такам килчĕ, касса ячĕ
Каш! кашлан пин турата.
Юман ÿкрĕ, тăрса юлчĕ
Пуш сĕтел пек ...

Епле хурланмăн-ха улăп пек юмана касса янишĕн, вăрмана тăлăха хăварнишĕн. Тавралăх илемĕпе киленекенсем кăна мар, ăна сăтăр тăвакансем те пур çав. Çут çанталăк йынăшни те витерейместчул чĕресене. Пин турат кашланине те илтмеççĕ мăкланнă хăлхасем...

Кĕнекере чечек-курăк, чĕр чунсемпе кăпшанкăсем çинчен калакан тупмалли юмахсем те пур. Тепĕр савăнăçлă самант – кăларăм страницисенчи ÿкерчĕксем эсир сăрласа илемлетессе кĕтеççĕ. Татьяна Кузьмина художник вĕсем урлă тупсăмсене пĕлтерет сире. Капăр ÿкерчĕксене курсанах алла кăранташ тытса сăрлама пуçлас килет.

Хаклă тантăшăмăрсем, эсир кăткăс ыйтусен хуравĕсене шырама, çут çанталăка сăнама, ÿкерме те сăрлама юрататăр пулсан «Загадки. Тупмалли юмахсем» кĕнеке – сире валли. Унпала эсир вăхăта хаваслă та усăллă ирттерĕр.

*Ольга АВСТРИЙСКАЯ.*

ПУЛТАРУЛĂХ КАÇĔ

# «САРĂ КĔПЕ» вулакансене уява пуçтарчĕ



Нумай пулмасть Чăваш наци библиотекинче Улькка Эльменĕн пултарулăх касĕ иртрĕ. Улькка Эльмен – чăваш литературинче паллă ят. Унăн тĕрлĕ çулсенче пичетленнĕ «Ма инçе-ши çăлтăрăм?», «Кая юлнă ÿкĕнÿ», «Çирĕп чунлисем телейлĕ» тата «Упраймарăм сана» кĕнекисене вулакансем хапăлласах йышăнчĕç, тата та çĕнĕ хайлавсем кĕтеççĕ.

Çак кунсенче Чăваш кĕнеке издательствинче Улькка Эльменĕн çĕнĕ кĕнеке «пиçсе» тухрĕ. «Сарă кĕпе» ятлă вăл. Шкулта аслă классенче вĕренекенсем валли çырнăскер, унăн алçырăвĕ ачасемпе çамрăксем валли чăвашла хайланă произведенисен 2015 çулхи конкурсĕнче çĕнтерчĕ. Тĕп сăнар – аслă класра вĕренекен Даша – чухăн çемьере ÿснĕ. Çитмен пурнăç айăплă-ши, анчах тăрăшуллă та ĕçчен хĕрачана амăшĕн вăрçмалли сăлтав тупăнсах тăрать. Асламăшĕ çеç Дашăшăн чун ăшши пулса тăрать кил-йышра. Пĕррехинче ялти лавккара ăна тин çеç сутлăха илсе килнĕ сарă кĕпе кăмăла каять, Даша валлиех çĕленĕ тейĕн. Анчах ашшĕпе амăшĕ туянса памĕç ăна – çакна хĕрача аван пĕлет. Çамрăк хĕре куç хывнă каччă ырă сунса çак кĕпене хăех туянать те сутуçă урлă парне пек парать. Ялта çакăн пек пулăм сисĕнмесĕр юлать-и вара? Дашăпа пĕрле вĕренекен хĕрсем çак пулăма тĕпе хурса тантăшĕ пирки усал сăмах сараççĕ.

– Кĕнекен ячĕ малтан пăхсан питĕ ансат пек, анчах унта тарăн шухăш пытаннă. Пурнăçра кашни япала пĕлтерĕшлĕ. Илемлĕ сарă кĕпе те çын шăпине татса пама пултарать иккен тесе каласшăн пултăм çак повеçре, – уçса пачĕ кĕнеке вăрттăнлăхне çыравçă.

Улькка Эльмен çыравçа Чăваш Республикин Культура министерствин професиллĕ ÿнер, вĕрентÿ тата халăх пултарулăхĕн пай пуçлăхĕ И.И. Ильина саламларĕ, ăна министерствăн Хисеп хучĕпе чысларĕ. «Ольга Геннадьевна кĕнекисене ялсенче чăтăмсăррăн кĕтеççĕ, юратса вулаççĕ. Çитес вăхăтра сирĕн çĕнĕ кĕнеке те ял вулавăшĕсене çитĕ», – тесе шантарчĕ вăл.

Чăваш Республикин Профессиллĕ писательсен союзĕн председателĕ Г.А. Максимов та уяв хуçине Писательсен союзĕн Хисеп хутне пачĕ, çыравçăн пултарулăхне хакласа ăшă сăмахсем каларĕ: «Улькка Эльмен кĕнекисенче хайĕн мăшăрне хисеплени, вăл вăхăтсăр пурнăçран уйрăлнишĕн хурланни сисĕнет. «Ма инçе-ши çăлтăрăм?», «Упраймарăм сана» кĕнекесенче эпĕ çакна уйрăмах сисрĕм. Ольга Геннадьевна кашни хайлавне чун витĕр кăларать, çавăнпа та вулакансем те вĕсене хапăлласа йышăнаççĕ. Тата та çĕнĕ кĕнекесем çырмалла пултăр».

Чăваш кĕнеке издательствин акапăча литературин редакторĕ О.Л. Федорова та пултаруллă çыравçа уяв ячĕпе саламларĕ. «Улькка Эльмен пирĕншĕн, кĕнеке кăларас ĕçре тăрмашкансемшĕн, чи малтанах – юратнă автор. Унăн пуян содержаниллĕ, тарăн шухăшлă кашни алçырăвĕ вулакан кăмăлне тивĕçтерекен кĕнеке пулса «пиçет» Чăваш кĕнеке издательствинче. Эпир сирĕнтен çĕнĕрен те çĕнĕ алçырусем кĕтетпĕр».

Ольга Геннадьевна пултарулăхне Анатолий Кибеч, Юрий Сементер, Валерипе Ольга Туркайсем, Василий Кервен тата уява килнĕ ытти хăна пысăка хурса хакларĕç, çыравçа интереслĕ хайлавсем шăрçаласа вулакансем патне çитерме сунчĕç.

*Ольга ВАСИЛЬЕВА.*

ЫТАРЛĂН

# Виçĕ арçын ача

Виçĕ арçын ача вăрмана кайнă. Унта вара – кăмпасем, çырласем, кайăксем! Кун каç еннелле сулăннине те сисмен ачасем.

Ялалла утаççĕ, хăйсем вара хăраççĕ: «Эх, килте лектереççĕ ĕнтĕ пире!» Çул çинче чарăнчĕç те канашлама пуçларĕç – тĕрĕссине каласан лайăх-и, тен, суймалла?

– Вăрманта мана кашкăр тапăнчĕ тесе суйăп эпĕ, – тет пĕрремĕшĕ. – Атте хăраса кайĕ те ятлаçмĕ.

– Эпĕ асаттене тĕл пултăм тесе калăп, – хуравлать иккĕмĕшĕ. – Анне савăнĕ те мана вăрçмĕ.

– Эпĕ вара тĕрĕссине калăп, – пĕлтернĕ виççĕмĕшĕ. – Тĕрĕссине калама яланах çăмăлтарах, тата нимĕн те шухăшласа кăларса пуçа ватмалла мар.

Виççĕшĕ те килĕсене саланчĕç. Пĕрремĕш арçын ача ашшĕне кашкăр çинчен каларĕ кăна – вăрман хуралçи курăнса кайрĕ.

– Ку тăрăхра кашкăрсем çук, – терĕ вăл.

Ашшĕ хытах çилленчĕ. Пĕрре – ывăлĕн малтанхи айăпĕшĕн, тепре – вăл улталанăшăн.

Иккĕмĕш арçын ача амăшне аслашшĕне курни çинчен хыпарларĕ. Ват çын хăй çак самантра хăнана çитрĕ. Тĕрĕслĕх савăнтах çиеле тухрĕ.

Амăшĕ хытах çилленчĕ. Пĕрре – ывăлĕн малтанхи айăпĕшĕн, тепре – вăл улталанăшăн.

Виççĕмĕш арçын ача килне çитнĕçитмен ним пытармасăр йăлт ăнлантарса пачĕ. Амăшĕ кăшт кăмăлсăрланчĕ пулин те, хăвăртах каçарчĕ ывăлне.

*Вырăсларан*
*Ольга ИВАНОВА куçарнă.*

# Илемлĕ вăхăтсене хĕлле те аса илĕп



Яланах çĕннине пĕлме ăнтăлакан Даниил Архипов çуллахи куна уйрăмах кăмăллать.

– Илемлĕ катасем, улăхсемпе ылтăн тулă ÿсекен уй-хирсем, кайăк юррисем кама илĕртмĕç-ши? Çапла, кунсем иртрĕç, чи лайăххисем... Илемлĕ вăхăтсене хĕлле те аса илĕп-ха, – тет вăл час-часах кĕрхи кунсем çитнишĕн кăшт пăшăрханса.

Кăçал Канаш районĕнчи Ăвăспÿрт Кипеч шкулĕн саккăрмĕш класне куçнă арçын ача çар çынни пулас тĕллевлĕ. Ахальтен мар вăл пушă вăхăтра çар техникисене ÿкерме кăмăллать. Хăш чухне шухăш аваăрне путса темчченех шурă хут çине ÿкерет те ÿкерет... Çапах та пĕрремĕш хут алла кăранташ тытни те асрах-ха. Ача сăнне ниепле те хут лаптăкĕнче кирлĕ пек вырнаçтараймарĕ, вăраххăн-вăраххăн хăйĕн çитменлĕхĕсене асăрхаса илчĕ те питĕ вырăнлă вырнаçтарчĕ. Кăнтăрларан каçчен ниçта тухмасăр тăрăшнă хыççăн çав сăна туса пĕтерчĕ. Килтисем ырларĕç. Малашне те хастарлăхпа палăрма ырă сунни çав тери хавхалантарчĕ ăна.

– Мĕнле матур ача эсĕ! Хăв ăстине хăв та чухлаймастăн ахăртнех. Эсĕ ÿкерÿ ăсталăхĕшĕн çуралнă иккен, ачам. Санăн тем тесен те ку енĕпе вĕренмеллех, – терĕ амăшĕ ÿкерчĕк çинчен куçне илеймесĕр.

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ. Ĕнтĕ ĕçĕсем те иртнĕ вăхăтрисемпе танлаштарсан ăнăçлăрах, кăмăллăрах пулса тухаççĕ.

...Эх, кăçал та каникула мĕн тери усăллă иртерчĕ Даниил. Тус-юлташĕпе тăтăш футболла, волейболла вылярĕ, шыва кĕме çÿрерĕ. Вăрмана çырла-кăмпана каймa вăхăт та тупрĕ хаваслă ушкăн.

– Мăйăр та тăраниччен çирĕмĕр, вăрман кучченеçне те чылай хатĕрлерĕмĕр. Унсăр пуçне çут çанталăк илемĕпе килентĕмĕр, чуна савăк кăмăл парнелерĕмĕр. Тата, паллах, килте аслисене пулăшма та манмарăмăр. Ара, çуллахи вăхăтра пахчара мĕн тери нумай ĕç-çке! – мăнаçланать арçын ача.

...Паян та хавас кăмăлпа утрĕ пĕлÿ çуртне Даниил. Акă шкул пахчи. Ăна карта тытса çавăрнă. Унта кĕмелли калинкке те пур. Садра тем тĕрлĕ йывăç ÿсет. Çак йывăçсене лартнă ачасем шкултан тахçанах вĕренсе тухнă.

– Ах, ытла чуна çĕклентерет-çке тĕнче илемĕ! Тавралла йывăç пулмасан çак хитрелĕх пулас та çук, – тесе класалла васкарĕ.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

Канаш районĕ,
Ăвăспÿрт Кипеч.

# Терроризмсăр малашлăха ĕненетпĕр

**Терроризма хирĕç кĕрешмелли пĕршухăшлăх кунĕпе килĕшÿллĕн пирĕн техникумри 57 ушкăнта класс сехечĕсем иртрĕç.**



Мĕн вăл терроризм? Ăçтан пуçланать? Мĕн патне илсе çитерет? Çак тата ытти ыйту тавра иртерчĕç калаçăва техникум директорĕ Л.В. Белов, ветерансен Совечĕн председателĕ Ю.И. Матвеев тата кураторсем.

Л.В. Белов экстремизм сăмаха та уçăмлатса пачĕ. «Çирĕпленнĕ хаклăхсене хирĕçлекен тата йышăнман системăна е вĕрентĕве, хаклăхсене обществăра улăштарма вăйпах хистенине экстремизм пек ăнланмалла», – терĕ вăл.

Çав вĕрентÿсем политикăпа, культурăпа тата тĕнпе çыхăнма пултараççĕ. Юлашки вăхăтра Интернетри экстремизм анлă сарăлчĕ. Вăл пропаганда çинче тытăнса тăрать. Унăн серепине ытларах çамрăксем çакланаççĕ.

Пирĕн çĕршывра та, ыттисенче те çирĕпленнĕ, йĕркеллĕ лару-тăрăва аркатакан чи пĕлтерĕшлĕ сăлтавсенчен пĕри – терроризм. Вăл халăхшăн та, кашни çыншăн та пысăк хăрушлăх.

Кураторсем студентсене тĕрлĕ лару-тăрăва лексен хăйсене мĕнле тытмаллине каларĕç. Экстремизма тата терроризма хирĕçле видеороликсем кăтартрĕç.

Унсăр пуçне çамрăксем Л.Ф. Юлмасова кураторпа Шупашкарти ОВД историйĕн музейĕнче экскурсире пулчĕç. Студентсен 1-мĕш общежитийĕнче пурăнакансем В.И. Егорова, Е.А. Беляева, Н.М. Рожкова воспитательсемпе тата Н.А. Андреева преподавательпе ачасемпе çамрăксен библиотекинче иртнĕ «Терроризмсăр малашлăх, терроризм малашлăхсăр!» акцие хутшăнчĕç.

*Иван БОЙКИН,*
*Рудольф СМИРНОВ,*
*Шупашкарти транспортпа строительство технологийĕсен техникумĕн вĕренекенĕсем.*

# Азбука куравĕ



Туссем, эсир шкула çÿреме пуçласан букварьти «Арăсланпа шăши», «Икĕ юлташ» тата кĕске ытти калава вуланине астăватăр-и? Тен, эсир вĕсене халĕ те шĕкĕлчеме юрататăр? Çавсене Лев Толстой çырнинчен вырăсларан чăвашла Иван Яковлев куçарнă. Паллă писателĕн ача-пăча валли çырнă «Филиппок», «Акула», «Кĕлет айĕнчи шăши» тата ытти калавĕсем мĕнле интереслĕ. Вĕсем тăрăх художниксем çырнă картинăсем епле хитре тата! Ÿкерчĕксене курма Шупашкарти «Радуга» культурăпа курав центрне каймашкăн ан ÿркенĕр. Унта иртнĕ эрнекун «Хальхи художниксен ĕçĕсенче Л.Н.Толстой «Азбуки» курав уçăлчĕ. Вăл шăп та лăп тĕнчипе палăрнă вырăс çыравçин çуралнă кунĕнче, авăн уйăхĕн 9-мĕшĕнче, ĕçлеме тытăнчĕ. Мускаври Л.Н.Толстой ячĕллĕ патшалăх музейĕнчен илсе килнĕ ÿкерчĕксене Ю.Васнецов, И.Кобяков, А.Николаев, Е.Рачев çырнă. Чăваш художникĕ В.Агеев И.Яковлев куçарнă хайлавсене ÿкерсе илемлетнĕ.

«Радуга» ĕçченĕсем экскурси иртерсе тата та нумай каласа кăтартаççĕ. Туссем, çавăн пекех эсир Лев Толстойăн 1913 çулта кун çути курнă азбукине те тытса кураятăр. Курав уçăлнă кун тĕп хулари 46-мĕш гимназире, 3-мĕш шкулта, 2-мĕш вĕренÿ центрĕнче ăс пухакансем тата студентсем пĕлĕве тарăнлатрĕç. Эсир те унта çитсе ăс-хакăла пуянлатăр.

*Елена ТРОФИМОВА.*

## Тавçăруллăрах пулсан хуравне хăвах тупан

**Чăнах та, амăшĕпе хĕрĕ мĕн пĕçерме хатĕрленеççĕ-ши?**




## Темĕн тĕрлĕ хĕç-пăшал, йăлт пытарнă тăваткал

Тăваткал ăшне темĕн тĕрлĕ япала та вырнаçнă. Эппин вĕсене тупма тăрăшăр-ха. Сăмахсем тахăш енне те хуçăлма пултараççĕ /диагональсĕр пуçне/.








| | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Ч | П | А | К | А | Ш | С | Е | Ц |
| Р | П | Ч | Ш | Ш | К | О | Н | А |
| Т | О | М | А | Т | А | А | В | И |
| Ă | Т | Н | К | А | С | Ш | Е | В |
| А | В | О | Е | Л | А | Н | О | Р |
| Л | И | М | Т | О | М | А | П | И |
| А | Д | Р | А | Б | Е | Л | Т | С |
| А | Р | Б | А | Л | Е | Т | О | Л |
| А | К | Т | А | Г | О | Р | Т | Е |








## Сăмахкаçмăш



**Сылтăмалла:** 1. Ют çĕршыври чиркӳ çынни. 4. Пахча çимĕç. 9. Киеври «хĕрлĕ лапам». 10. Казахстанри хула. 11. Вĕренӳ училищи /кĕскен/. 13. Кĕрешмелли кавир. 16. Тăмана евĕр попугай. 19. Чехов калавĕнчи пӳлĕм. 21. Пăр çĕмĕрекен карап ячĕ. 24. Мауглин ăслă çĕленĕ. 28. Телевизор курмалли хут татки. 29. Ăна-кăна туяннине çирĕплетекен справка. 30. Авалхи грексен карапĕ. 31. Африкăри сунар.

**Аялалла:** 1. Хула пайĕ. 2. Октант «юлташĕ». 3. АПШри штат. 5. Çурт пайĕ. 6. Унта кашăк-чашăк çăваççĕ. 7. Вăл юрăпа Пугачева чапа тухнă. 8. Çӳлтен панă ăс. 11. Тăхăнмалли хатĕр. 12. Вĕрентекенĕн «виççĕмĕш» алли. 14. Вăл ĕне хырăмне пăсмасть. 15. Ăна лезгинка ташланă чух кăшкăраççĕ. 17. Пĕчĕк вăрман. 18. Ӳссе çитĕнмен лаша. 19. Наган. 20. Скандинавири Хĕл мучин ырăнĕ. 22. Сак /вырăсла/. 23. Вăл хула çине атом бомби ӳкнĕ. 25. Тутлă шăршă. 26. Физика терминĕ. 27. Пичетлеме илнĕ оттиск страници.

## Йĕппи хыççăн çиппи

**Аяларах илсе кăтартнă сăмахсене çак тăваткалсене вырнаçтарса тухмалла. Пуçламăшне кăтартсах панă. Эппин, малалла!**

Автан, алтăр, Анапа, арман, астра, Итака, калла, кĕпер, колли, ролли, рамка, ротан, ручка, сахăр, сетка, сӳтĕк, сысна, тирек, тутар.




***Николай КРАСНОВ*** (Йĕпреç районĕ) ***хатĕрленĕ.***